Неҫтӗр Йанкас



# Вихтӑрпа Шӑнкӑрт

Чӑвашистат

Шупашкар 1931

Чувашская
книжная палата
г. Чебоксары Чувашской АССР



НЕҪТӖР ЙАНКАС

7—10 ҫулхи аҕасем валҕӆи

# Вихтăрпа шăнкăрҕ

Карттинсене М. ҪПИРИТОНĂВ
хутошнĕк тунă

Ҕăвашсен Патшалăх Истаттĕлстви
Шупашкар — 1931

Отпечатано в тип. № 1 Чувашгосиздата, Чебоксары

Уполном. Чувашлита № 1344. Заказ № 636. Тираж 8100 экз.



Пӳрте уҫă кантăк витĕр
Ҫур хĕвелĕ йарăмлант̧ĕ.
Пайан пирĕн пĕт̧ĕк Вихтăр
Ыйхăран ирех вăрант̧ĕ.
Пит ҫуса шăлне тасатрĕ.
Пиншакне шăлса йакатрĕ.
Măйне хĕрлĕ калстăк ҫыхрĕ.



Тула хӗрлӗ пӗсехеллӗн,
Кулса тухрӗ вӑл тирпейлӗн.

Тулта ӑшӑ. Ҫуртсем ҫийӗн
Тӑмламсем пӑт-пат... ӳкеҫҫӗ.
Тӑмлав шыв ҫинҭех ҫерҫийӗ
Пайан ҫипуҫне ҭӳкесшӗн.



Пахҫара ним ҫаранусӑр
Шӑнкӑрҫсем йурра тӑсассӗ.
«Йӑва маншӑн тӑвӑр, йусӑр!» —
Тесе кашни йӑлӑнассӗ.

Вихтӑрсен отреҫӗ пана
Хӑй йышне ёнер сатани:
«Пур ёҫре те пионерӑн



Пулмалла йалан примерлă...
«Кайăк кунĕнҫе» кашнийĕн
Пултăр пĕр шăнкăрҫ йăвийĕ...»

Ҫавăнпа та пайан Вихтăр
Шăнкăрҫсем ҫине йăвашшăн
Пăхса илҫĕ те каларĕ:
«Есĕр тини кунта ҫитрĕр?..»



Сарайне вăл ҫупса кĕҫĕ.
Хатĕрлерĕ тĕрлĕ хатĕр:
Мăлатукĕ, пуртă, ҫĕҫĕ...

Ак пуҫланҫĕ унăн ĕҫĕ:
Хăма тупрĕ вăл пĕр татăк,
Саваларĕ те йакатрĕ,
Ултă касăк туса татрĕ;



Шăтăкларĕ,
Пуралларĕ,
        пăталарĕ,
            тăрăларĕ;

Тĕпне
        типĕ утă сарҫĕ...



Ҫапла пирӗн Вихтӑр
Ҫас ак—
Пӑлатник пек,
пит типтерлӗн

«Пӗҫӗк пӳрт»
туса та лартрӗ.



Кантрапа вара
кĕрнеклĕн

Хурăнран

ҫыхса
хăвартĕ.



Ак хаљ Вихтăр
Хĕпĕртерĕ:

Унăн «пĕҫĕк
пӳртĕнҫе» те
Шăнкăрҫ
йурă
кĕвĕлерĕ...



Кайăк вăл—
Хресҫенĕн тусĕ,
Хурт-кăпшанкăсен
тăшманĕ.
Кайăкран
пит пысăк усă,
Кайăка пăхма ан манăр!!!

# Кайăк-кĕшĕк—пирĕн тус.

КАЛАÇУ.

Пирĕн уйсенђе ÿсекен тырпулсен, пахђара ÿсекен çимĕçсен, вăрмансенђе ÿсекен йăвăçсен пĕђĕк тăшманĕсем питĕ нумай. Вăл тăшмансем — хуртсемпе тĕрлĕрен кăпшанкăсем. Хăйсем пĕђĕкçеç пулин те, вĕсем йăвăç-курăксене, пахђа-çимĕçсене питĕ пысăк сийен кÿреççĕ. Нумай вĕреннĕ çынсем шутласа кăларнă тăрăх—çав хурт-кăпшанкăсем пирĕн Совет Сойусĕнђе пĕр çулталăк хушшинђе темиçе çĕр пин тенкĕлĕх сийенлеççĕ.

Пирĕн вăрмансенђе, йалсенђе пурăнакан тĕрлĕрен кайăксем çине ахаљ кăна пăхсан—вĕсенђен нимĕнле усă та çук пек. Анђах ку апла мар. Кайăксем çав тĕрлĕ хурт-кăпшанкăсене çисе вĕсене пĕтерсе пыраççĕ.

Йалхуçалăхĕн тăшманĕсем пулса тăракан хурт-кăпшанкăсене пĕтерсе—кайăксем пире усă кÿреççĕ.

Анҫах епӗр ҫав хамӑр туссене усӑ кӳрес вӗсене тӑшмансенҫен хӑтарас тӗлӗшпе мӗн тӑватпӑрха? Нимех те тумаспӑр, темелле. Ҫасҫасах, кайӑксене усӑ тӑвас вырӑнне, епӗр вӗсене сийенлетпӗр.

Акӑ, сӑмахран, ҫуллахи вӑхӑта илер. Ун ҫухне кайӑксем ҫӗпӗ кӑлараҫҫӗ. Пӳртҫурт хӗррисенҫе, йӑвӑҫ тӑррисенҫе кайӑк ҫӗппи с е н аҫаш сассисене илтме пулаť. Кайӑк уссине пӗлмен аҫасем ҫав ҫӗпӗсене ҫас-ҫасах йӑвасенҫен кӑларса илеҫҫӗ. Алла тытсан вӗсем, тӗрексӗрскерсем, паллах, вилеҫҫӗ. Йе тата аҫасем кайӑк йӑвисенҫен кайӑк ҫӑмартисене илсе ҫӗмӗреҫҫӗ. Ку—ниме йурӑхсӑр, киревсӗр йӑласем.

Пионерсем хаҫ ку киревсӗр йӑласене хирӗҫ хытӑ кӗрешеҫҫӗ ӗнтӗ. Пионерсем кайӑксене шефа илҫӗҫ. Пӗтӗм Сойусри пионерсем Ҫӗрӗҫ комиссариаҫӗпе, тата ытти орканисатсисемпе тунӑ токӑвӑр тӑрӑх кӑҫалхи ҫул кашни пионер отреҫӗ 15 шӑнкӑрҫ йӑви, тата 10 кормушкӑ (апат ҫитермелли) тума сӑмах панӑ.

Ҫак пӗҫӗк кӗнекере Вихтӑр йатлӑ пионер шӑнкӑрҫсене ваҫҫи пӳрт туса пани ҫинҫен каласа кӑтартнӑ. Вихтӑр — матур пионер.

Вăл кайăксене лайăх пурăнса ĕрҫеме пулăшаť. Вăл пионерсем Çĕрĕç комиссариаҫĕпе тунă токăвăра пурнăçа кĕртет.

Мĕнпур пионерсемпе шкул аҫисен те çак Вихтăр пекех тума тăрăшмалла. Кайăксене çулла çавнашкал йăвасем туса панисĕр пуçне—вĕсене тата хĕлле те пулăшмалла. Хĕлле, май килнĕ таран, кайăксене тăрантарас пулаť. Кăна ваҫҫи кормушкăсем тумалла. Пĕр сăмахпа—кайăксене пур майсемпе те сыхласа усрама тăрăшмалла. Вĕсене ĕрҫеме май памалла. Мĕншĕн тесен, Йанкас сăвăçăн сăмаххипе калаcан:

—«Кайăк вăл—
Хресҫенĕн тусĕ,
Хурт-кăпшанкăсен
Тăшманĕ.
Кайăкран пит
пысăк усă...»

Пионерсемпе шкул аҫисем хаҫхи вăхăтра кайăк уссине пĕлеççĕ ĕнтĕ. Анҫах çак кĕнеке кайăкăн уссине, кайăксене пулăшма кирлине тата лайăхрах ăнланса илме пулăшĕ, тетпĕр.

# ПИОНЕРСЕМ, ШКУЛ АЂИСЕМ!

## ЂĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ

**сире ваЂЂи çакнашкал**

**çĕнĕ кĕнекесем кăларЂĕ:**

**Миславски**—Тнепрострой.
**Шкловски**—Туркçип.
**Е. Минтлин** — «Краççĕн» пăрсем хушшинЂе.
**Афинокенăв** — Хура Вар (пйесса).
**Сатс**—ФрисПауĕр(пйесса).
**А. Кринпĕрк**—Патшасемпе революЂутсионерсем.
**Алакĕр Ваçлейĕ** — Паттăр Çапук (пйесса).
**Ç. Йалавин**—Хисеплĕ Кĕçтенкки.
**Ваççилйĕв**—Çилçуна.

**Н. Йанкас**—Вихтăрпа шăнкăрЂ.

**Тата çитес кунсенЂе çак кĕнекесем пиЂетленсе тухаççĕ:**

**Мĕтри В.**—Пирĕн сас (сăвăсем).
**Трупина М.**—ПĕЂĕк прикатирсем (2 калав).
**Александрăв**—Аш хапрăкĕ.
**Преопрашенски** — Петук ултавĕ (пйесса).

**Кĕнекесене пурне те карттинсемпе илемлетнĕ. Вĕсене пурЂкопперативлапкисенЂе те илме пулать.**

Цена 15 коп.
Хакĕ 15 пус

Нестор Янгас

★

ВИКТОР и СКВОРЕЦ — стихи

Чувашское Государственное Издательство
Чебоксары — 1931